Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

22 (8088) № * Шăмат кун, 2013 ҫулхи пуш (март) уйăхĕн 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Вĕренӳ учрежденийĕсенче

## Шкул – иккĕмĕш кил

*Виҫҫĕмĕш теҫеткене яхăн ачасене вĕрентес ĕҫре вăй хуракан ҫак хĕрарăмсем Нискасси шкулне чăнласах иккĕмĕш кил вырăнне хунинчен тĕлĕнместĕп те. Хăйсем ҫинче епле яваплăх выртнине В. Васильевăпа Р. Семенова (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) лайăх туяҫҫĕ, хăйсен ăнланăвне ĕҫпе ҫирĕплетеҫҫĕ. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен тата социаллă педагог тивĕҫĕсене пурнăҫлакан Валентина Викторовна юратнă ĕҫĕнчи хастарлăхĕпе ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕ хушшинче тахҫанах ырă ят ҫĕнсе илнĕ. Шкул ачисене 29 ҫул географипе технологи предмечĕсемпе ăс паракан Раиса Васильевна вара ĕҫри тăрăшулăхне кура 15 ҫул ĕнтĕ шкул директорĕн ачасене воспитани парас енĕпе ĕҫлекен ҫумĕ.*

*Яваплăха туякан вĕрентекенсем хăйсен вĕренекенĕсен шкул хыҫҫăнхи пурнăҫĕпе те интересленсех тăраҫҫĕ.*

А. БЕЛОВ
сăн ӳкерчĕкĕ.



## Вăтам пĕлӳ илесси пуриншĕн те меллĕ

***Нумаях пулмасть Чăваш Республикин Конституцине кĕртнĕ улшăнусем хыҫҫăн ҫынсем хушшинче вăтам пĕлӳ тӳлевлĕ пулать текен сăмах сарăлчĕ. Республика Конституцине Раҫҫей Федерацийĕн тĕп саккунĕпе шайлаштарни ҫакăн пек тĕрĕс мар хумхану патне илсе тухрĕ.***

**Район администрацийĕн вĕренӳ тата ҫамрăксен политикин пайĕн ертӳҫи З. ДИПЛОМАТОВА:**

– Пĕлтĕр декабрĕн 29-мĕшĕнче РФ Президенчĕ «Вĕренӳ ҫинчен» Федераллă саккуна алă пусса ҫирĕпletrĕ. Ҫак саккун пĕтĕмĕшле кăҫалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрет, хăш-пĕр уйрăм пайсем вара январĕн 1-мĕшĕнчен вăйра тăраҫҫĕ.

Йышăннă саккунпа патшалăх гражданcене тӳлевсĕр тата пахалăхлă вĕренĕве тивĕҫмелли правăна шантарать тата вĕренӳ сферинчи ытти хутшăнусене йĕркелет, граждансен, обществăн тата патшалăхăн интересĕсене хӳтĕлет. Ҫак саккунпа вăтам пĕлӳ илесси тӳлевсĕр тата пуриншĕн те вĕренме меллĕ пулмаллине ҫирĕплетнĕ.

Патшалăх федераллă вĕренӳ стандарчĕсемпе (ФГОС) килĕшӳллĕн шкулчченхи, пĕтĕмĕшле тĕп, пĕтĕмĕшле вăтам, вăтам профессиллĕ тата конкурс мелĕпе аслă пĕлӳ илесси, ҫак шайри пĕлĕве ҫын пĕрремĕш хут илет пулсан, тӳлевсĕр пулмалла.

Районта вĕренӳ пур ачашăн та меллĕ: 13 вăтам, 9 тĕп шкул, пуҫламăш шкул – ача сачĕсем – 4. Вăтам шкулсенчен 9-шĕ база шкулĕсем шутланаҫҫĕ, вĕсенчен 3-шĕ – ресурс центрĕсем: Мăн Сĕнтĕрти, Калайкассинчи тата Йӳҫкассинчи вăтам шкулсем. Шкул автобусĕсем кунсерен 144 ялтан 957 ачана база шкулĕсене турттараҫҫĕ. Ачасем ăнăҫлăрах аталанчăр тесе 9-мĕш классенче профиль уммĕнхи вĕрентĕве йĕркеленĕ, 10–11 классенче – профиль вĕрентĕвне.

Шкулчченхи вĕренӳ тытăмĕнче ача-пăча сачĕ – 15, шкулсем ҫумĕнчи шкулчченхи ушкăнсем – 13, пуҫламăш шкул – ача сачĕсем – 4. Шкулчченхи вĕренӳ услугисемпе паянхи куна ачасен 80,1 процентне тивĕҫтернĕ. Хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕрте тата Муркашра ача-пăча сачĕсене каяс текен 1,5 – 3 ҫулхи ачасен черечĕсем пур. Ҫуллахи вăхăтра Муркашра 60 ача вырнаҫмалăх ача-пăча сачĕ пулмалли ҫурта юсаса пĕтермелле. Мăн Сĕнтĕрте пристрой тăвас ĕҫ ыйтăва та кусран вĕҫертместпĕр.

1-мĕш класа вĕренме килекенсен йышĕ юлашки ҫулсенче пĕр пекрех тытăнса тăрать. Районти вĕренӳ учрежденийĕсем 1-мĕш класа пурĕ 515 ача йышăнма хатĕр пулсан кăҫал хальлĕхе палăртнă тăрăх 334 ача килмелле. Ҫаппа вара пĕлӳ илесси пуриншĕн те меллĕ.

## Вăхăта пăхăнни – саккуна пăсманни

ЗАГС пайĕнче

***Пурнăҫри тĕрлĕ лару-тăрура тĕрлĕ документ кирлĕ: сăмахран, ача ҫуралнине е ҫын вилнине ҫирĕплетекен хутсем. Ҫак ĕҫ хучĕсене вăхăтра илмелле. Мĕншĕн тесен регистраци вăхăтне пăсманни саккуна пăхăнни пулать.***

***Тĕрлĕ справкăсене мĕнле тапхăрта илмелле? Ҫак ыйтăва район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуҫлăхне Н. КОРНЕЕВĂНА хуравлама ыйтрăмăр.***

– Ача ҫурални, ҫын вилни, мăшăрланни, ят улăштарни тата пурнăҫри ытти хăш-пĕр самантсене документпа ҫирĕплетмелле. Вĕсене пурне те патшалăх органĕсенче регистрацилемелле. Пурнăҫри сăлтавсене пула ҫыннăн правасем те улшăнаҫҫĕ: хăшĕсем пăрахăҫланаҫҫĕ, хăшăсем хушăнаҫҫĕ.

Ача ҫурални ҫинчен ҫак савăнăҫлă лару-тăру хыҫҫăн пĕр уйăх иртиччен тивĕҫлĕ документ илме ЗАГС пайне заявлени ҫырса пĕлтермелле.

Ҫын вилнине заявленипе вăл вилнĕ кунран виҫĕ талăк иртиччен пĕлтермелле.

Мăшăрланнине заявлени панă хыҫҫăн пĕр уйăхран пулас арăмĕ те, упăшки те ЗАГСа пĕрле килсен ҫирĕплетеҫҫĕ. Уйрăм лару-тăрусенче саккунпа палăртнă тăрăх пĕр уйăхран ытларах е сахалрах вăхăт та параҫҫĕ.

Мăшăр килĕшсе уйрăлма шутларĕ пулсан тата ҫак ҫемьере ҫул ҫитмен ачасем ҫук пулсан арăмĕпе упăшки уйрăлнине Ҫемье кодексĕпе килĕшӳллĕн ЗАГС пайĕнче ҫирĕплетеҫҫĕ. Мăшăртан пĕрне суд хыпарсăр ҫухалнине ҫирĕплетнĕ е ăна виҫĕ ҫул ытла ирĕкрен хăтарма йышăну пур пулсан уйрăлни пирки свидетельствăна мăшăр е мăшăртан пĕри заявлени ҫырнă хыҫҫăн пĕр уйăхран параҫҫĕ. Суд йышăнăвĕ хыҫҫăн мăшăр хăш кун ЗАГС пайне пырать, уйрăлнине ҫав кун регистрацилеҫҫĕ. Суд йышăнăвĕ вăя кĕнĕ кунран мăшăр уйрăлнă шутланать.

Ачана усрава илнине заявлени ҫырса панă кун кирлĕ документсемпе пырсан регистрацилетпĕр. Заявлени пулман пулсан – ачана усрава илесси пирки суд кăларнă йышăну вăя кĕнĕ хыҫҫăн пĕр уйăхран. Ашшĕлĕхне палăртнине те заявлени ҫырса панă кунах регистрацилеме юрать.

Ят улăштарма ыйтса ҫырнă заявление пĕр уйăхра тишкереҫҫĕ. Шута хумалли сăлтавсем пур пулсан ку тапхăра ЗАГС пайĕн ертӳҫи тăсма ирĕклĕ.

Н. НИКОЛАЕВА

Раҫҫейре

## Республика 12 программăна хутшăнать

2013 ҫулта пирĕн республика 12 федераллă программăна хутшăнать. Вăл шутра «Яла 2013 ҫулччен социаллă аталантарасси», «Раҫҫей Федерацийĕнче 2006 – 2015 ҫулсенче физкультурăпа спорта аталантарасси», «Раҫҫейри транспорт системине аталантарасси (2010 – 2015 ҫулсенче)», «Раҫҫейри суд системине аталантарасси», «Раҫҫейри культура (2012 – 2018 ҫулсем)», «РФ сывлăш ҫыхăнăвĕн пĕрлехи системине модернизацилесси (2009 – 2015 ҫулсем)», «Ҫурт-йĕр» 2011 – 2015 ҫулсем, хими хĕҫ-пăшалне пĕтересси тата ытти те.

Ҫак тĕллевсемпе республикăна 3,2 млрд тенкĕ килет.

Районта

## Вăраха тăсмасăр пурнăҫламалла

Кĕҫнерни кун ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсем паян-ыран татса памалли ҫивĕч ыйтусене сӳтсе яврĕҫ. Район администрацийĕн пуҫлăхĕ Р. Тимофеев ертсе пынă канашлура чи малтанах культура ĕҫченĕсен ĕҫ укҫине саккунпа килĕшӳллĕн тапхăр-тапхăрăн ӳстересси пирки сăмах пулчĕ. Ҫак ĕҫе пурнăҫласси пĕтĕмпех вырăнсенчи бюджетран килет. Ҫавна май ял тăрăхĕсенче ку ыйтăва питĕ тĕплĕн шухăшласа татса памалла. Ял тăрăхĕсенчи хуҫасăр пурлăха тупса палăртса саккунпа килĕшӳллĕн хуҫасăр тесе йышăнасси, пай ҫĕрĕсене йĕркене кĕртесси (ку ыйтупа йывăрлăхсем сахал мар), нумай ачаллă ҫемьесем валли ҫĕр лаптăкĕсене ҫителĕклĕ уйăрасси тата ытти пирки те тĕплĕ калаҫу пулчĕ. Пуҫлăхсен вăраха тăсмасăр пурнăҫламалли ĕҫ чылай. Пай ҫĕрĕсем тĕлĕшпе акă вĕсен малашне кашни эрнерех отчет тума тивĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

## Ҫур аки ҫывхарать

Ҫурхи шыв-шур сассипе тулнă апрель уйăхне ҫĕр ĕҫĕпе пурăнакан чăваш ака уйăхĕ тесе ахальтен каламан: хĕл ыйхинчен вăраннă тĕнче ҫур акине хатĕрленет. Чи ответлă тапхăр тесе хаклать ăна хресчен. Хаклать те ир-каҫа пăхмасăр ҫĕр-аннемĕр умĕнчи яваплăха туйса уй-хир ĕҫĕсене хатĕрленет. Епле пырать-ха ҫак хатĕрленӳ?

Ҫак ыйту ҫине тулли хурав парассипе ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра районти пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсен инженерĕсемпе агрономĕсен ҫур аки умĕнхи йăлана кĕнĕ конференцийĕ иртĕ.

## 90 ҫул тултарчĕҫ

Хăйсен пурнăҫĕнче сиенлĕ йăласемпе туслă пулман, ĕҫрен ютшăнман ҫынсем нумай пурăннине паян час-часах куратпăр. Вĕсен кун-ҫулĕн никĕсне алла иленсем паян ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пуласси пирки те иккĕленӳ ҫук. Ҫак тĕслĕх вырăнне манăн паян Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи тĕп усадьбăра пурăнакан Мария Игнатьевна Паргеевăна тата Ильинка ял тăрăхĕнчи Хопкĕерте пурăнакан Василий Матвеевич Матвеева илсе кăтартас килет. Ҫынна пулăшасран, ҫĕр ĕҫĕнчен, ҫĕр-шыв сыхлавĕнчен пăрăнман ĕҫпе вăрçă ветеранĕсем пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче 90 ҫул тултарчĕҫ.

Пирĕн ырă тĕслĕхри ветерансене татах нумай пурăнма Турри пулăштăрччĕ!

А. БЕЛОВ.

Саламлатпăр



Хаклă ҫыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, масака – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Иван Леонидович ЯКОВЛЕВА** 50 ҫулхи сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, ăнăҫу, ҫемьере килĕшӳ, вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей. Пурăн эсĕ ҫĕр ҫул савăнса, пурнăҫ телейне туйса, мăшăрупа ачу-пăчуна, мăнукна савса. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, кинĕ, мăнукĕ тата ҫывăх тăванĕсем.**

Ҫырăнтару – 2013

## Июльтен илсе тăма

**«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата иккĕмĕш ҫур ҫулта илсе тăма малалла ҫырăнтараҫҫĕ.**

**Апрелĕн 1-мĕшĕнчен хаҫата ултă уйăха ҫырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

# ХАЛĂХ ТĔРĔСЛЕВĔ

Проект Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

## «Çыхăну яланах уçă пулмалла»

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав ТИМОФЕЕВ:**

«Халăхпа влаç хушшинчи çыхăну яланах уçă пулмалла. Влаç органĕсемшĕн хупă темăсем, ыйтусем пулмалла мар. Мĕншĕн тесен татса памалла мар ыйтусем çук. Ял тăрăхĕсенче вырăнти пухусем, район администрацийĕн кунĕсем иртеççĕ. Вĕсем шăпах влаçпа халăх хушшинчи çыхăнăва уçăрах та çирĕпрех тума тивĕç. Ыйтусене пĕр самантра пурнăçлама май пулманнине кăна ăнланмалла. Çынсем çакна ăнланаççĕ.

Пирĕн районта пахалăхлă шывпа тивĕçтересси, çулсем тăвас ыйтусем çивĕччине пурте пĕлетпĕр. Район администрацийĕ те, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те ыйтусене татса парассипе ĕçлеççĕ. Анчах та тӳрех пур ял тăрăхĕнче те çак ыйтусене пĕр харăс татса пама çук. Ĕçсене тапхăр-тапхăрăн пурнăçлатпăр».

## Çынсен сĕнĕвĕсене шута илеççĕ

***Муркашра район администрацийĕн кунĕ иртнĕ эрнере пулчĕ. Вырăнти активлă çынсем – район тата ял тăрăх шайĕнчи депутатсем, ял старостисем, Муркашра вырнаçнă хăш-пĕр учрежденисемпе организацисен ертӳçисем иртнĕ çул ял тăрăхĕнче мĕн пурнăçланипе паллашрĕç, малалла мĕнле утăмсем палăртассипе кăсăкланчĕç.***

Ял тăрăхĕнче хăш ыйтусем çивĕч тăнине кунта çулталăк хушшинче килнĕ 74 çыру тата 3186 сăмахпа каласа ыйтни çăмăллăнах кăтартать. Вĕсенчен ытларахăшĕ çĕрпе усă курассипе, шывпа тивĕçтерессипе, тавралăха тирпей-илем кĕртессипе, обществăлла йĕркене сыхлассипе тата ытти социаллă пĕлтерĕшлĕ самантсемпе çыхăннă. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Ермолаев кашни çырăва çийĕнчех хурав панине тата ăнлантару ĕçĕсем ирттернине пĕлтерчĕ. Унăн докладĕнчен ял тăрăхĕн администрацийĕ вырăнта пурăнакансен тăнăçлăхĕ çине те тимлĕх уйăрни палăрчĕ. Акă, сăмахран, 2012 çулта кăна пурĕ 17 çемье тĕрлĕ программăсене хутшăнса хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма социаллă тӳлевсем илме пултарнă. Муркаш сали çулран çул сарăлса пынине шута илсен кунта пурăнакан çынсен йышĕ те пысăкланса пынине палăртмалла. Ачасем çуралнине кăна тишкерес пулсан та пĕлтĕр ял тăрăхĕнче пурĕ 86 ача çут тĕнчене килнĕ, виçĕм çул вара – 56. Муркашри Парк урамĕ пысăк хăвăртлăхпа аталанать. Çавна май Муркашри ача-пăча сачĕсенче черет пулнине те (кун пирки çынсенчен ыйту пулчĕ) ăнланмалла. Лицей пулнă çуртра çак çул юсав ĕçĕсене вĕçлемелле. 60 ача вырнаçмалăх ача-пăча сачĕ хăйĕн алăкĕсене уçмалла.

Ял тăрăхне тирпей-илем кĕртессипе пĕлтĕр сахал мар ĕç пурнăçланă. Çӳп-çап тăкнă вырăнсене, вăл шутра вăрман хĕррисенчисене те, тасатнă. Анчах та районти ытти ял тăрăхĕсенчи пекех кунта та Малиновка, Çурлатри, Шаптак тата Çĕньял Муркаш ялĕсенчен çӳп-çап турттарса тухас ыйту çивĕч-ха. Хĕллехи вăхăтра вара çулсем хĕррипе, урамсенче автотранспорт чылай ларни çулсене юртан йĕркеллĕ тасатма чăрмантарать. Çапла вара Сергей Николаевич район центрĕнче транспорт лартмалли ятарлă лаптăксем кирлине палăртрĕ. Ку ыйтупа малашне ĕçлессе пĕлтерчĕ.

Тирпей-илем тата хăт кĕртессипе Муркаш ял тăрăхĕ республикăра малтисен ретĕнче. Иртнĕ çул акă Раççей шайĕнче виççĕмĕш вырăна тухрĕç – 800 пин тенкĕ хавхалантару укçине тивĕçме пултарчĕç. «Çак укçа-тенкĕпе ял тăрăхне тирпей-илем кĕртессинче усă курмалли тĕрлĕ хатĕр туяннă, вăл шутра – ача-пăча выляв площадкисене вырнаçтармалли хатĕрсем те», – тивĕçнĕ укçана тĕллевлĕ усă курнине асăнчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

Ку çул Çурлатринче çул туса пĕтерме, ял тăрăхĕнче ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтерессине (ку ыйту Çурлатринче, Муркашри Восточная урамра уйрăмах çивĕч) татса парассипе ĕçлеме шантарчĕ Сергей Николаевич. Муркашри Заводская, Чапаев урамĕсенче тата шкул çумĕнчен Шаптак ялĕнчи çĕнĕ урамсем патне каякан тротуарсем тума планланине те пĕлтерчĕ. Çак ĕçсене тума палăртни вара ял тăрăхĕн администрацийĕ çынсен шухăш-кăмăлне мала хурса, вĕсене ăнланса ĕçленине çирĕплетрĕ.

Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем Л. Андреев тата В. Данилов та сăмах илчĕç. Халăхпа влаç органĕсене çыхăнтаракансем ял тăрăхĕнчи çынсене мĕнле ыйтусем пăшăрхантарнине аван пĕлсе тăни курăнчĕ.

Район администрацийĕн кунне пухăннисем «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компани» МУП ертӳçине те итлес кăмăллăччĕ. Анчах предприятирен никам та пулмарĕ. Депутатсемпе старостăсем малашне çак предприяти отчечĕсене кварталта пĕрре итлесен вырăнлă пулмаллине палăртрĕç. Çак кун, сăмахран, Муркашра район администрацийĕн кунĕ иртнипе усă курса çынсемпе тĕл пулма Шупашкартан çитнисем те пурччĕ...

## Ырă пуçарулăхпа активлăх кирлĕ



***Николай Ванеркина пирĕн районта лайăх пĕлеççĕ. Питĕ активлă та пуçаруллă çын, ертӳçĕ – «Чувашия-курорт» санатори» акционерсен уçă пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ – обществăлла ĕç те чылай пурнăçлать. Чи малтанах вăл Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ. Çакă хăех питĕ пысăк ответлăх ыйтать. Кунсăр пуçне Николай Григорьевич районти шалти ĕçсен пайĕн обществăлла канашĕн ертӳçи, районти вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕ çумĕнчи попечительсен канашĕн ертӳçи те.***

**– Николай Григорьевич, обществăлла канашсем, çакна май ытти пĕрлешӳсем пирĕн обществăна пысăкрах утăмсемпе аталанма пулăшаççĕ тенипе килĕшетĕр-и?**

– Кирек хăш çĕр-шывра та çынсем вĕсен шухăш-кăмăлне шута илекен гражданла обществăра пурăнаççĕ. Общество çакăн пек пулмасан вăл сывă пулмасть. Обществăлла канашсем тата ытти тĕрлĕ пĕрлешӳсем ĕçлесен çынсем активлăхрах пулаççĕ. Гражданла общество вара шăпах активлă та сӳрĕк мар çынсем пуррипе палăрса тăрать.

Акă, сăмахран, Европăри çĕршывсене илес пулсан унта никам та никамшăн та нимĕн те татса памасть: çын обществăлла активлă пулсан, ответлăха туять пулсан вăл яланах хăй шухăшлать. Пирĕн обществăра вара пĕр-пĕриншĕн «шухăшлас» самантсем халĕ те пур. Çакă чăрмав кӳрет те. Апла пулсан обществăлла канашсем кирлĕ. Тахçан халăх контролĕ тени анлă сарăлнă пулнă. Çав ĕçе пурнăçлакансем çынна воспитани панă, тĕрĕс çул çине тăма пулăшнă.

Саккунсем, йĕркелĕхе пăхăнма хистекен нормăсем пулни халăха дисциплина енчен çирĕплетме пулăшаççĕ. Анчах та лайăх «ĕçлекен» гражданла обществăра пурăнма тытăнмасăр йĕркелĕх те пулмасть. Кашни çын активлă пулмаллине тата йĕркелĕхшĕн тăрăшмаллине хăйĕн ăсĕ-тăнĕ витĕр кăлармасть пулсан кун патне пыма йывăр.

Анчах та çынсем пачах та нимĕн те шутламаççĕ тесе каламастăп. Вырăнта пурăнакан çынсем ăçта мĕнле ыйту çивĕч тăнине пĕлеççĕ. Çавăнпа та обществăлла шухăша пĕлсе тămалла. Депутатсем (пур шайрисем те) халăха влаçпа çыхăнтаракансем пулса тăраççĕ. Обществăлла канашсем вара çынсен ыйтăвĕсене пĕрле татса пама ытларах май параççĕ.

**– Пурпĕр çынсенче сӳрĕклĕх пурри палăрать-ха.**

– Шел пулин те, çĕр-шыва темиçе теçетке çул каялла ертсе пырас тытăмăн сасси паян та пĕтмен. Вăл шăпах çынсен сӳрĕклĕхĕнче палăрать те. Нумайăшĕ уншăн çав ыйтăва урăххи татса парĕ тесе шутлать. Кун пирки манма вăхăт ĕнтĕ. Мана нимĕн те кирлĕ мар тенипе те мала каяймăн. Тепĕр хут калатăп: çынсен ырă пуçарулăхĕпе активлăхĕ кирлĕ. Халĕ мĕнле: кам та пулин выртать çул çинче е тата юнашарах харкашаççĕ – пурте тенĕ пек çакăн çине аякран пăхса иртсе каяççĕ. Пĕр-пĕрне чармастпăр е асăрхаттармастпăр пулсан пирĕн общество сывă пулĕ-и вара? Йĕркеллĕ обществăра пурăнас тесен кашнинех пурнăçри чылай саманта улăштармалла. Массăллă информаци хатĕрĕсен те, обществăн та йĕркелĕхшĕн тăрăшса ăна «сиплемелле».

**– Йĕркелĕх тенĕрен. Çынсем юлашки çулсенче полици сотрудникĕсене ытларах шанма пуçлани курăнать.**

– Полици сотрудникĕсем паллах профилактика ĕçне пурнăçлаççĕ: ĕçри тĕрлĕ майсене усă курса пулма пултаракан преступленисене асăрхаттараççĕ. Профилактика ĕçĕ вĕсен пĕтĕмĕшле ĕçĕн пысăк процентне йышăнать. Юлашки çулсенче чăнах та çынсем полици сотрудникĕсене ытларах шанма пуçлани палăрать. Кашни шăнкăрава, кашни хыпара пăхса тухса хурав параççĕ. Шалти ĕçсен министерствинче пулса иртнĕ реформа тен кăшт маларах та кирлĕ пулнă пулĕ. Унăн усси курăмлă. Эпĕ хам та, сăмахран, малтанхи çулсемпе танлаштарсан, пакунлисене ытларах шанатăп.

**– Анчах та çын чи малтанах çемьере воспитани илет.**

– Ачана пĕрремĕш кунранах тĕрĕс воспитани памасан каллех йĕркеллĕ общество пуласси пирки калама йывăр. Амăшĕн сĕчĕпе тăн кĕмесен качака сĕчĕпе тăн кĕмест теççĕ. Ку çаплах. Анчах та йĕркеллĕ воспитани илсе ӳснĕ ача пурнăçра мĕнле обществăна лекни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çапла вара обществăра кашни çыннăн тӳпи курăмлă темелле. Сӳрĕк пулмалла мар. Сăмахран, кунта пирус туртмаççĕ, çӳп-çапа кунта ан пăрах, тесе никам та асăрхаттармасть пулсан эпир малалла питĕ йывăррăн аталанатпăр. Çавăнпа та йĕркелĕхе тытса тăрасси участковăйсен тата полицин ытти сотрудникĕсен ĕçĕ кăна тесе шутламалла мар пирĕн.

Гражданла сывă общество тăвасси вăл питĕ вăраха тăсăлакан тата йывăр пулăм: çак тĕллев патне çитиччен темиçе ăру та улшăнма пултарать. Йĕркеллĕ обществăра пурăнас тесен çыннăн чи малтанах хăйĕн активлă пулмаллине ăнланмалла.

## «Тăван кĕтес шăпи пирĕн алăра»

**Шухăш**

**Муркаш ял тăрăхĕн депутачĕ Александр КУЛИКОВ район администрацийĕн кунĕнче тухса каланинчен:**

– Эпĕ Муркашра çуралнă, кунтах ӳснĕ. Çавăнпа та маншăн район центрĕ мĕнле аталанни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Хальхи вăхăтра вара, шел пулин те, çынсене нумайăшне нимĕн те интереслĕ мар, нимĕн те кирлĕ мар. Çакă вăл питĕ пăшăрханмалли пулăм тесе шутлатăп. Çакна тумалла, ку кирлĕ, тесе эпир пурте ыйтма пĕлетпĕр. Анчах та шăпах çавна ыйтма эпĕ мĕнле те пулин тивĕçлĕ ĕç тунă-и-ха тесе шухăшласа пăхнă-и кам та пулин?

Муркаш илемленсе, хăтланса пырать. Юлашки çулсенче çĕнĕ çуртсем чылай турĕç. Çынсем хваттерсене тупăшса тенĕ пекех туянаççĕ. Анчах та ялсенчен Муркашри çĕнĕ çурта пурăнма куçакансен те Муркаша юратма вĕренмелле. Паллах, вĕсен хăйсем çуралса ӳснĕ тăван кĕтесĕ пур, анчах та вăл Муркашра пурăнать пулсан çак кĕтесе те хисеплетĕр: кунти йăласене те, вăл шутра пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемпе, йĕркелĕхпе çыхăннисене те. Кашни çыннăн хăйĕн хыççăн тирпейлемелле, машинăсене ăçта кирлĕ унта лартса хăвармалла мар – ку вăл каламасăр пĕлмелли.

Фанфуриксем сутнине хирĕç тĕппипе кĕрешме май çук пулсан çав спиртлă шĕвеке туянакансемпе «ĕçлемелле». Вĕсен ăс-тăнĕ патне мĕнле те пулин пĕрле «шаккаса» çитме тăрăшмалла. Пĕр-пĕрне асăрхаттарса калани çилленмелли япала мар, хамăрăн культура, йĕркелĕх шайне кăшт та пулин ӳсме май пани кăна.

Йытăсем урамра çӳреççĕ тетпĕр. Анчах та йытăсенчен чылайăшĕ мăй çыххипе. Апла ку каллех хамăрăн çитменлĕх мар-и? Йытта ялта кил хуçалăха хураллама е урамра чупса çынсене хăратма тытаççĕ хуçисем?

Ял администрацине çивĕч йытусемпе тухатпăр. Ыйтусем пулмалла мар теместĕп – пулмалла. Халăхпа влаç хушшинче çыхăну пулни питĕ лайăх. Анчах та ял тăрăхĕн çак ыйтусене кĕске вăхăтра тата ансатраххăн татса пама май пултăр тесен пирĕн кашнинех пуçаруллă пулмалла, хамăрăн тăван кĕтес шăпи пирĕн алăра пулнине ăнланса илмелле. Муркашра пурăнатăн пулсан Муркаш патриочĕ пулмалла.

**РЕДАКЦИРЕН: паян пирĕн хаçатра «Халăх тĕрĕслевĕ» проектăн пĕрремĕш кăларăмĕ кун çути курчĕ.**

**Халăхпа влаç, юхан шывăн икĕ çыранĕ евĕр, пĕр-пĕринсĕр пулаймĕç. Çынсем патшалăх, муниципаллă влаç ĕç-хĕлне хутшăнма тивĕçлĕ. Влаç та халăх умĕнчи ответлăха туйни пĕлтерĕшлĕ. Пĕр-пĕрне ăнланни, пĕрле пулса ĕçлени çеç малалла аталанма май парать.**

**Çынсем влаç ĕç-хĕлне хутшăнасси вара тăван ялтан пуçланать тесе калас килет. Вĕсем, сăмахран, шкулсемпе ача-пăча сачĕсен, патшалăхăн ытти учрежденисен ĕçĕ-хĕлĕпе аталанăвĕ çине витĕм кӳме пултараççĕ. Чылай учрежденире ертсе пыракан е попечитель канашĕсем туса хунă, обществăлла канашсем те йĕркеленĕ.**

**Çак обществăлла пĕрлешӳсем мĕнле ĕçлесе пыраççĕ? Хăшĕсем хăйсен обществăлла тивĕçне хастартарах пурнăçлаççĕ? Халăхпа влаç хушшинчи çыхăнăва çынсем мĕнле хаклаççĕ? Депутатсен ĕçĕ тивĕçтерет-и?**

**Çак тата ытти нумай ыйтусен хуравĕсене эпир уйăхра пĕрре тухса тăракан малашнехи кăларăмсенче çутатса тăрăпăр. Вулакансем ку тĕлĕшпе хăйсен шухăшне пĕлтерессе шанатпăр.**

**Кăларăма Н. Николаева ертсе пырать. Хыпарсене редакцие çырупа е шăнкăравласа (62-1-38) пĕлтерме пултаратăр.**

# Апрелĕн 14-мĕшĕнче – суйлав

## Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидат ФЕДОРОВ Александр Сергеевич



Федоров Александр Сергеевич 1980 çулта Шупашкар хулинче çуралнă. 1998 çулта Шупашкарти 11 № пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкултан вĕренсе тухса алла аттестат илнĕ. Çав çулах Шупашкарти строительсен техникумне вĕренме кĕнĕ. 2001 çулта асăннă техникума вĕренсе пĕтерсе алла диплом илнĕ. Çавна май А. Федоров хăйĕн пурнăçне строительство ĕçĕпе тачă çыхăнтарнă. Паянхи куна Шупашкарти ООО «ВИКО» предприятире вăй хурать.

Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама вăхăт çитнĕ май А.С. Федоров хăйне хăй кандидата тăратнă. Юлашки вăхăтра ăна ялти пурнăç интереслентерет, ялта пурăнма шухăшлать. Çавăнпа та ял-йышпа пĕрле тачă ĕçлесе, пĕрле пĕр шухăшлă пулса, пĕр ĕмĕтпе ĕçлеме шантарать.

Материал тӳлевсĕр йĕркепе пичетленет.

## Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидат ТРОФИМОВ Геннадий Вениаминович



Трофимов Геннадий Вениаминович 1981 çулта Муркаш районĕнчи Кашмаш ялĕнче çуралнă. Паянхи кун та çав ялтах пурăнать. Кашмаш ялĕнчи тĕп шкултан тăхăр класс вĕренсе тухнă. 1998 çулта Муркашри пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти строительсен техникумне вĕренме кĕнĕ. Виçĕ çул вĕреннĕ хыççăн 2001 çулта алла диплом илнĕ, 2006 çулччен тĕрлĕ строительство организацийĕсенче ĕçленĕ.

Г.В. Трофимов 2006 çулта Çатракасси ял тăрăхĕн администрацийĕн специалисчĕ пулса ĕçлеме пуçланă.

2012 çулхи август уйăхĕнчен ăна вăхăтлăх ял тăрăхне ертсе пыма шанса панă. Ял тăрăхĕнче ĕçленĕ май Г.В. Трофимов тĕрлĕ обществăлла ыйтусене сӳтсе явнă çĕре активлă хутшăнать.

Кĕçех суйлав çитсе пырать. Унта Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйламалла. Геннадий Вениаминович Трофимова «ЕДИНАЯ РОССИЯ» Партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ сĕннипе кандидата тăратнă. Чăнах та ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма çăмăл мар. Анчах халăх шанать пулсан, çак шанчăкран тухас марччĕ. Ял тăрăхĕнче ĕçленĕ май кашни кунах халăхпа пĕрле. Ял çыннине хумхантаракан, пăшăрхантаракан ыйтусене курса, пĕлсе тăрать. Çав ыйтусен хуравне тупма пĕлмелле, май çитнĕ таран ял халăхне пурăнма условисем лайăхлатса памалла. Ума тухса тăракан йывăрлăхсене пĕччен татса параймăн. Пĕрле, пĕр шухăшлă пулсан кăна вĕсене çĕнтерме пулать.

Г.В. Трофимовăн суйлав умĕнхи программи сирĕн ыйтусене татса парассипе никĕсленнĕ. Вăл Çатракасси ял тăрăхĕнче пурăнакан çынсем валли йĕркеллĕ пурнăç условийĕсем тăвассипе, ял тăрăхĕн аталанăвне йĕркелесе пырассипе тачă çыхăннă. Геннадий Вениаминович Трофимова çак пысăк, йывăр ĕçе шанса пама пулать, вăл ăна тивĕçлипех пурнăçлама пултарать. Ял халăхĕпе, тĕрлĕ шайри ертӳçĕсемпе йĕркеллĕ хутшăнма пĕлни ăна кашни кун ума тухса тăракан ыйтусене вăхăтра татса пама пулăшĕç.

Хисеплĕ суйлавçăсем! Эсир апрелĕн 14-мĕшĕнче Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма Геннадий Вениаминович Трофимова суйласа тĕрĕс утăм тăватăр. Çакăн пек ырă кăмăллă, ăслă-тăнлă çамрăка ĕçе пĕлсе туса пыма пултаракан ответлăха шанса паратăр. Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма шăпах çакăн пек маттур çын кирлĕ.

Материал тӳлевсĕр йĕркепе пичетленет.

## Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидат ФРОЛОВ Денис Павлович



Денис Павлович Фролов 1987 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Республикин Шупашкар хулинче çуралнă. Вырăс. 1994 çулта Шупашкарти 6-мĕш вăтам пĕлӳ паракан шкула вĕренме кайнă. Шкула 2002 çулта вĕренсе пĕтернĕ. Шкулта вăтам вĕреннĕ. Юратнă предметсем: истори, биологи тата физкультура. Çав вăхăтрах ирĕклĕ майпа кĕрешессипе «ДЮСШ Олимп резерв училищине» çӳренĕ. Ирĕклĕ майпа кĕрешессипе спорт мастерĕн кандидачĕ. Вĕрентекенĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ Владимир Николаевич Ананьев пулнă. Спортпа пĕрлех Шупашкарти ачапăча творчество çуртне аквариумистика кружокне çӳренĕ. Аквариумистика паянхи кун та унăн пурнăçĕнче юратнă вырăн йышăнать.

Хальхи вăхăтра Шупашкар хулинчи ООО «ЧСК» предприятире стропальщик пулса ĕçлет.

Шупашкар хулинче пурăнать. Çемьеллĕ. Ашшĕпе амăшĕ Шупашкар хулинчи предприятисенче ĕçлеççĕ.

Çĕр-шыв наградисем çук. Партинче тăмасть. Судпа айăпланман. Православи тĕнне ĕненет.

Суйлав вăхăчĕ çывхарсах килет. Кашни суйлавçăн пирĕн пек кандидатсенчен пĕр кандидат кăна суйламалла. Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма Денис Павлович кăна юрăхлă. Вăл хăй пурнăçĕнче халăха улталаса çĕрсем илмен, ял хуçалăхне сиен кӳмен. Ют çĕр-шыври банксенчи счет çинче укçа-тенкĕ çук.

Денис Павлович çын сăмахĕ хыççăн каймасть. Вăл хăй тĕллĕн, халăхпа килĕшсе калаçса татăлса решенисем йышăнма пултарать. Хальхи вăхăтра пĕтĕмпех халăхран килет. Денис Павлович Фролова ял тăрăхне ертсе пыма шанас пулсан çакă пĕртен-пĕр тĕрĕс утăм туни пулĕччĕ. Вăл вырăнти проблемăсене лайăх пĕлет. Паян ялта çулсене йĕркене кĕртесси, юсасси тата çĕнĕрен тăвасси – тĕп ыйту. Çав вăхăтрах ĕçпе вăрçă ветеранĕсене, пенсионерсене, инвалидсене манмалла мар. Çак категориллĕ çынсем çине нумайрах пăхмалла. Общество юлашки вăхăтра вĕсем çине пăхса çитерейместь пек курăнать. Халăха кашни кун хумхантаракан ыйтусене татса парасси, вĕсемпе пĕрле ĕçленинчен лайăххи çук. Çамрăксем, шкул ачисем çинчен те манмалла мар. Спорт, сывлăхлă пурнăç çинчен шухăшлакан çамрăксене пулăшмалла.

Вăл хăй те спортсмен пулнă пирки çак опыта çамрăксене пама хатĕр. Çак çӳлерех лартнă программăна халăхпа пĕрле тума пулать тесе шанатпăр.

Сирĕн Ярапайкасси ял тăрăхĕн пулас пуçлăхĕ – Денис Павлович Фролов.

Материал тӳлевсĕр йĕркепе пичетленет.

# Апрелĕн 14-мĕшĕнче – суйлав

## Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидат НИКОЛАЕВА Марина Дмитриевна



Марина Дмитриевна Николаева 1984 çулта Элĕк районĕнче çуралнă. 2001 çулта Вутланти вăтам шкултан кĕмĕл медальпе вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти ял хуçалăх академине вĕренме кĕрет. Студент вăхăтĕнче пĕрре мар Ленинград облаçĕнче практика вăхăтĕнче ĕçleme тӳр килет. 2006 çулта диплом алла илсен Çĕмĕрле хулинче вырнаçнă акционерсен уçă обществин «Молочное дело» сĕт-çу заводĕнче лаборант пулса ĕçлет. Чире пула ĕç вырăнне улăштарма тивет. 2008 çултан пуçласа вара «Феникс» акционерсен уçă обществинче вăй хурать. Çемьере улшăнусем пулса иртнĕ хыççăн шăпа Муркаш районне Милютакасси ялне илсе çитерет. 2012 çултанпа Чăваш Республикин Муркаш районĕн «Сывлăх» ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ, физкультурăпа спорт комплексĕ» ачасен хушма вĕрентĕвĕн муниципаллă автономлă учрежденийĕнче бухгалтер пулса ĕçлет.

Çемьеллĕ: мăшăрĕпе икĕ ача пăхса ӳстереççĕ.

Çитес суйлавра Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлатпăр. Эпĕ çак тăрăхра çуралса ӳсмен пулсан та, вырăнти çивĕч ыйтусене курсах тăратăп: çул-йĕр хăрушсăрлăхне ӳстерме çулсен пахалăхне лайăхлатмалла, юсамалла, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене официаллă йĕркепе лайăхлатма çамрăк тата нумай ачаллă çемьесен ыйтăвне татса памалла, социаллă объектсене тĕпрен юсамалла (ял тăрăхĕн территорийĕнчи модульлĕ фельдшерпа акушер пунктне), ялта пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсене уçса вĕсен производствине аталантармалла, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр лаптăкĕсемпе тĕллевлĕн усă курмалла, пĕве пусĕсене тасатса юсамалла, çĕнĕ урамсенчи электрификаци ĕçĕсене вĕçне çити туса ирттермелле, ял тăрăхĕнче вырнаçнă çăва картисене тирпейлĕ тытмалла тата ытти те. Çавăнпа та çынсен пăшăрханăвĕ те пысăк. Çакна такам калани тăрăх мар, кунсеренех хам куçпа курса пĕлсе тăратăп.

Паян хастар та ĕçчен, явапláха туякан ял çамрăкĕсене пурнăçра хăйсен пултарулăхне тӳрре кăларма чăн майсем туса памалла, вĕсен малашлăха шанчăклăн пăхмалла пултăр. Çитĕннĕ çынсем валли кăна мар, чăн малтанах çамрăксем валли ĕçкĕлĕхе хирĕç тухăçлă кампани йĕркелемелле. Халăха спортпа туслашма явăçтарас, сывă пурнăç йĕркин пĕлтерĕшне тата унăн уссине ăнлантарас енĕпе тăвакан ĕç пахалăхне тата та çӳллĕрех шая çĕклемелле.

Раççейре 2013 çула Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк тесе пĕлтернĕ.

Ансаттинчен тытăнмалла – пирĕншĕн йăлана кĕнĕ ырă ниме мелĕпе усă курса чи малтанах хамăр картишĕнче, урамра йĕрке тумалла, çурт умĕнчи пахчара чечек лартса ӳстермелле, чалăшса кайнă хӳмене тӳрлетсе лартмалла, çуртăн мал енне сăрласа илем кӳмелле. Тăван ен тасалăхĕ тата тирпейлĕхĕ куçа савăнтарать, ырă шанăç кӳрет, халăх кăмăл-туйăмне çĕклет, ыранхи куна шанчăклăн пăхма вăй-хал хушать.

Ял-йышра, пĕр-пĕрин хушшинче ырă сыхăнусем йĕркелесе пурăнасси, паллах, пуçлăхсенчен чылай килет. Анчах та çынсенчен пулăшу, ăнлану пулмасан нимĕнле ертӳçĕ те нихăçан та пĕччен пĕтĕмпех йĕркелесе çитерейместь. Çакна вăхăт пĕрре мар çирĕплетсе пачĕ. Çавăнпа та ялйышпа пĕрле ĕçлесси шанатăп, хамăр пурнăça эпир тăрăшса ĕçлесен кăна лайăхлатапăр.

Материал тӳлевсĕр йĕркепе пичетленет.

## Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидат ПАВЛОВ Николай Витальевич



### Çĕр ĕçне парăннă çын

Николай Витальевич Павлов 1963 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче Саратов облаçĕнче çуралнă. Çĕнĕ çĕрсене уçма комсомол путевкипе кайнă ашшĕпе амăшĕ 1965 çулта Муркаш районĕнчи Шурчана таврăнсан Николайăн пĕтĕм ачалăхĕ çак тăрăхра иртрĕ.

1981 – 1984 çулсенче Тинĕс-Çар флотĕнче службăра тăнă хыççăн Шурча каччи Чăваш ял хуçалăх институчĕн механизаци факультетне вĕренме кĕчĕ. Кунта та вăл яланах малти ретре пулчĕ: лайăх вĕренекен, группа старости, студентсен строитель отрячĕн комиссарĕ. Вĕреннĕ çулсенчех икĕ çул Казахстанра студентсен механизациленĕ отрячĕпе тырă вырчĕ. Республикăна ДОН-1500 комбайнсем килме пуçласан аслă пĕлӳ илнĕ Николай Витальевич механизаторсене ял хуçалăх институчĕн ял хуçалăх машинисен кафедринче вĕрентме пуçларĕ. Пĕрремĕш çĕнĕ комбайнсем çинче те хăй ĕçлерĕ.

2003 çулта «Чувашагрокомплектра» «хир карапĕсем» валли сервис центрĕ уçăлсан аслă пĕлӳллĕ инженер унта ĕçleme пуçларĕ. Республикăна килнĕ çĕнĕ йышши кашни комбайна ĕçе хатĕрлесси, механизаторсене ĕçleme вĕрентесси, вырăнлă канашсемпе сĕнӳсем вăхăтра парасси унăн тивĕçĕ пулса тăчĕ.

Кунпа пĕрлех ачаран тыр-пул пуçтарса кĕртес ĕçе хутшăннăскер юлашки çулсенче те кашни вырмарах «хир карапĕпе» хире тухрĕ. И. Скворцов фермер хуçалăхĕнче ĕçленĕрен нумай пĕрлешӳллĕ хуçалăха тырă пуçтарса кĕртме пулăшрĕ.

Хăй ĕçне лайăх пĕлекен специалист тĕлĕшпе ял хуçалăх министерствинче те, районта хăйĕн пулăшăвĕпе усă курнă хуçалăхсенче те ырă ят кăна.

Чăваш. Çемьеллĕ. Елена Ивановнăпа икĕ ача ӳстернĕ.

Николай Витальевич Павлова Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланма «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ сĕннипе кандидата тăратнă.

Хальхи вăхăтра ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма çăмăл мар. Çакăнта вырăнти ял халăхĕ шансан-пулăшсан çеç тĕрĕс утăм тума пулать. Ватă çынсен, ĕçре вăрçă ветеранĕсен, инвалидсен, çамрăксен, ялта пурăнакансен ыйтăвĕсене лайăх ăнланать вăл. Ял тăрăхне тирпей-илем кĕртесси, урамсене таса шыв çитересси, пай çĕрĕсемпе ĕçлесси – пурте пĕрпĕринпе çыхăннă ыйтусем. Вĕсене пурте пĕр шухăшлă пулсан çеç пурнăçа кĕртме пулать. Çакă Николай Павловăн суйлав умĕнхи программи пулса тăрать.

Материал тӳлевсĕр йĕркепе пичетленет.

## Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидат АЛЕКСЕЕВА Эльвира Михайловна



Эльвира Михайловна Алексеева 1982 çулхи кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи Мулкачкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1988–1999-мĕш çулсенче Орининти вăтам шкулта вĕреннĕ. 1999 çулта вара Шупашкарти Чувашпотребсоюзăн кооперации техникумне вĕренме кĕнĕ. 2002 çулта алла диплом илнĕ хыççăн аслă пĕлӳ илме Мускав хулин право тата управлени академине юриспруденци факультетне вĕренме кĕнĕ. 2005 çулта аслă пĕлӳллĕ юрист дипломне илнĕ.

Çав 2005 çулах Ярапайкасси ял тăрăхĕнче вырнаçнă ООО «Агрофирма Лидер» хуçалăха кадрсемпе ĕçлекен инспектора ĕçleme вырнаçнă. Унтан 2008 çулта вара Ярапайкасси ял тăрăхне 1 категориллĕ специалиста ĕçleme куçнă. 2012 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕнче вăй хума тытăннă. Паянхи кун та вăл Ярапайкасси ял тăрăхĕнчех тăрăшать. Çемьеллĕ: мăшăрĕпе виçĕ ача пăхса ӳстерет.

Кĕçех Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама та вăхăт çитет. Çавна май эпĕ хамăн кандидатурăна та тăратас терĕм. Паллах ăнсăртран мар, эпĕ ку тăрăхра вун пĕрмĕш çул ĕнтĕ пурăнатăп. Çак ĕçе кӳлĕнес умĕн çынсемпе канашларăм, сĕнӳсене шута илтĕм, çак утăма турăм.

Эпĕ хам та ял çынни, çавăнпа та ял çыннисене пăшăрхантаракан, хумхантаракан ыйтусем нумай пулнине пĕлетĕп: вырăнти çулсене тăвасси, юсасси, çӳп-çап илсе тухасси, тирпей-илем кĕртесси, çĕнĕ урамсенче электрификаци ĕçĕсене вĕçне çити туса ирттересси, шыв ыйтăвĕ, çамрăксене спорт енĕпе тивĕçтересси, çĕр лаптăкĕсем уйăрса парасси тата ыттисем те. Ку такам каланипе мар, кунсерен хам куçпах куратăп.

Çав ыйтусен хуравне тупса, татса пама пĕлмелле, май çитнĕ таран ял халăхĕн пурнăç условийĕсене лайăхлатса пама тăрăшмалла, пултарнă таран федераллă программăсене хутшăнмалла. Ума тухса тăракан йывăрлăхсене, паллах, пĕччен татса параймăн, ял-халăх шухăш-кăмăлĕ те питĕ хаклă. Тĕрлĕ шайри ертӳçĕсемпе йĕркеллĕ хутшăнма пĕлни кашни кун ума тухса тăракан ыйтусене вăхăтра татса пама та пулăшĕç. Малтанах ĕнтĕ çĕрсемпе тухăçлă усă курасси шухăшлаттарать. Манăн тĕллев – кашни çын çĕр çинче чунне парса ĕçleme пултартăр, уншăн вара ĕç укçине тивĕçлĕ илтĕр. Çавăнпа та сирĕнпе, хисеплĕ суйлавçăсем, тачă çыхăнса ĕçлессе шанатăп.

Чăнах та ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма çăмăл мар. Анчах халăх шанать пулсан, çак шанчăкран тухас марччĕ.

Хисеплĕ суйлавçăсем! Сире çакна каласа хăварас килет: пĕтĕмпех сирĕнтен килет. Эсир ака уйăхĕн 14-мĕшĕнче Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕç-хĕлне мана пурнăçласа пыма шанса парсан, эпĕ вырăнта тăракан ĕçсене пĕтĕм чун-чĕререн пурнăça кĕртме тăрăшăп, паллах, çак ĕçре ĕçлесе курман çын мар, хамăн та пуласлăх çак тăрăхрах.

Тайма пуç сире пурне те! Турри сывлăхне патăр пурсăра та!

Материал тӳлевсĕр йĕркепе пичетленет.

**Турай ял тăрăхĕнче иртнĕ район администрацийĕн кунĕнче**

# Хамăртанах килет çав, хамăртанах

***– Хамăр пурăнакан ял тăрăхĕ мĕнле аталанасси кунта пурăнакан кашни çынран килет. Пирĕн йывăрлăхсене хамăрсăр пуçне никам та татса параймасть, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Турай ял тăрăхĕнче ирттернĕ район администрацийĕн кунĕнче.***

***Ростислав Николаевич çавăн пекех чуна ыраттаракан ыйтăва та ним тумасăр ăшра тытмалла марри çинчен каларĕ. Мĕншĕн тесен вăхăт иртнĕçемĕн çав тиев йывăрлансах пырать.***

***– Енчен те сире вăл е ку ыйту канăçсăрлантарать пулсан, килĕр район администрацине. Ыйтăр, канашлăпăр, ыйтăва пĕрле сӳтсе явăпăр, – терĕ Ростислав Николаевич.***

Ыран мĕнле пурăнасси паян эпир çав ыйтăва татса парас тесе хамăр мĕн тунинчен килни Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Н. Павловăн иртнĕ çулхи ĕçĕсене пĕтĕмлетнĕ отчетлă докладĕнчен те яр уççăнах курăнчĕ. Хăйсенчен килмен сăлтавсене пула Анаткассинчи Культура çуртне малтан палăртнă пек 2011 çулта туса пĕтерме май килмерĕ пулин те, пĕлтĕр вĕçлерĕçех ку ĕçе. Çавăн пекех 1030 тăв. м. чухлĕ асфальт çул, 4 пĕве юсарĕç. Мăн Токшик ялне шыв кĕртме проект туса пĕтерчĕç тата ытти те.

Хăйсем çине тăнипех нумай çул ĕмĕтленекен шухăш та пурнăçланассинчен пĕр утăмра кăна тăрать: Муркаш–Турай çула тума проект хатĕрлерĕç. Вăл экспертиза витĕр тухнă. Кăçалхи 2 кварталта ăна тума пуçламалла. Çитес çул хута каймалла вăл. Кунсăр пуçне Мăн Токшик ялĕнче 500 м тăршшĕ çул çине вак чул сарса йĕркене кĕртме шухăшлаççĕ, ялти культура вучахĕ патĕнче те йĕркеллĕ площадка пулмалла.

### КУ ЫЙТУ РАЙОНТИ ПУР ПАЙ ÇĔРĔСЕН ХУÇИСЕНЕ ТЕ ПЫРСА ТИВЕТ

Паян вара Турайсем хуçисемшĕн кирлĕ мар шутланакан пай çĕрĕсене ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçарассипе район судне материалсем тăратассипе ĕçлеççĕ. Калас пулать, япăх мар пырать ку ĕç кунта. Суворов яч. хис. хуçалăх ĕç опытне кунта тĕслĕх вырăнне илсе кăтартмалла. Асăннă хуçалăх территорийĕнче пурăнакансем пай çĕрĕсене хăйсем çине куçарнине те, ăна хуçалăха арендăна панине те сиссе те юлмарĕç тесен те юрать. Хуçалăх ертӳçи ял çыннисемпе калаçса татăлса ку ĕçе йăлт хăй çине илчĕ. Çынсем çĕр ыйтăвĕпе чупса хăшкăлмарĕç. Çапла майпа çав тери тĕрĕс утăм турĕç. Пĕр енчен, пай çĕрĕсене хăйсен харпăрлăхне куçарчĕç. Халь ĕнтĕ вĕсем унпа хăйсем пĕлнĕ пек усă курма пултараççĕ. Паллах, тĕллевлĕ усă курас тесе – ӳсен-тăран продукцине çитĕнтерсе.

Ял çыннисем çав çĕре хуçалăха арендăна пачĕç. Хуçалăх вĕсене уншăн тырă-улăм парать. Апла пулсан, пай çĕрĕсем, хуçисем унта хăйсем ĕçлемесен те, арендăна панăскерсем, çемье бюджетнех çăмăллăх кӳреççĕ.

Виççĕмĕшĕнчен, вăхăт тата кăмăл çуккине пула çав çĕрсем пушшăн мăян ăшĕнче лармаççĕ. Пай çĕрĕсемпе тĕллевлĕн усă курать хуçалăх.

Кама çав пай çĕрĕсем кирлĕ мар тесе шутлакансенчен пĕр ушкăнĕ тĕрĕс утăм турĕ. Малтан Киров яч. хуçалăх территорийĕнче пурăнакансем 90-ăн пай çĕрĕсен свидетельствисене ял тăрăхне илсе килсе пачĕç. Çапла майпа хăйсемех пай çĕрĕсем кирлĕ марри çинчен пĕлтерчĕç. Пай çĕрĕсем кирлĕ маррисемшĕн ку питĕ вырăнлă йышăну, мĕншĕн тесен халь çав çĕр лаптăкĕсем ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçаççĕ. Ял тăрăхĕ вара вĕсене хуçалăха арендăна парса, çав укçине çак ял тăрăхне аталантарнă çĕрех ярать. Суворов яч. хис. хуçалăх ав кӳршĕллĕ Етĕрне районĕн пай çĕрĕсен пĕр пайне çулталăка 700 тенкĕпе арендăна илнĕ. Ял тăрăхĕшĕн укçа вĕт ку. Çул сарма е урăх тĕллевпе усă курма бюджета укçа килет. Хуçалăх вара çав çĕр çинче экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци туса илет. Таса апат çисе ӳснĕ выльăхăн ашĕ те тасарах пулать. Çакă мар-и вара чи кирли потребительсемшĕн.

Хăш-пĕр пай çĕрĕсен хуçисем вилнĕ е пай çĕрĕсен хуçисем нимĕнле татăклă йышăну та тумаççĕ пулсан, халиччен те вĕсемпе усă курман пулсан вара ял тăрăхĕ кун йышшисем тĕлĕшпе суда документсем тăрататать. Суд йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн вара ку пай çĕрĕсем те ял тăрăхĕн харпăрлăхнех куçаççĕ. Апла пулсан арендăна парса е сутса тунă укçи – ял тăрăхне аталантармалли майсем татах хушăнни пулать. Кунта паянхи куна 97 пай çĕрĕ пирки район судне документсем тăратнă ĕнтĕ. Пурĕ 130 га пулать вăл. Майăн 1-мĕшĕччен уйăх ытларах вăхăт пур-ха (мĕншĕн тесен усă курман пай çĕрĕсене ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçарас тĕллевпе суда çак кунччен документсене тăратса пĕтермелле). Пурĕ Турай ял тăрăхĕнче хуçисене кирлĕ мар шутланакан пай çĕрĕсем 632.

Ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçнă пай çĕрĕсен шăпи тĕлĕшпе ял тăрăхĕ шутлать ĕнтĕ. Апрельте кунта 400 га çĕре арендăна пама аукциона тăратаççĕ. Атту кунта пĕлтĕр харпăр хăй тумалли укçа-тенкĕне палăртнă чухлĕ пухса çитереймен. Çĕре арендăна панă укçа вара шăпах вырăнти бюджетăн çав йĕркине пысăклатма пулăшать.

Çавăнпа та хальлĕхе хăйсемшĕн тивĕçлĕ утăм тума ĕлкĕреймен пай çĕрĕн хуçисене çакăн çинчен аса илтерес килет: пай çĕрĕсене е хăвăр харпăрлăха куçарса хăвăр продукци туса илĕр е хуçалăха арендăна парăр.

Кирлĕ мар пулсан, çав пай çĕрĕсен свидетельствисене ял тăрăхне килсе парăр та пай çĕрĕсем кирлĕ мар тесе заявлени çырăр. Вара сирĕн пай çĕрĕсем суда каймасăрах ял тăрăхне куçĕç.

Çак сăмахсем хăйсен пай çĕрĕсем пирки суда каймалли çынсене те пырса тивеççĕ. Турай ял тăрăхĕн администрацийĕн специалисчĕсем киле пырсан çакăн пек тĕслĕхсемпе тĕл пулма пулать иккен.

– Суда та каймастăп, çĕрĕ те кирлĕ мар, – тесе шарт та март тăвакан та пур.

Эппин суда кайса çӳрес мар тетĕр пулсан хăвăрах пай çĕрĕ кирлĕ мар тесе йышăну тăвăр та ял тăрăхне пĕлтерĕр. Енчен те сирĕн пай çĕрĕ тĕлĕшпе суда документсем тăратнă пулсан, хăраса ӳкме кирлĕ мар: хуçисене кирлĕ мар шутланакан пай çĕрĕсене ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçармалли саккун ыйтакан процедура ку. Сирĕн суда каймах тивет.

Эппин, çак кунсенче тарăннăн шутлăр та – тĕрĕс йышăну тăвăр.

Тепĕр асăрхаттару. Сирĕн пай çĕрĕсемпе усă курма укçалла доверенноç илес текенсемпе ан çыхланăр. Хăвăр пай çĕрĕсемпе хăвăрах усă курăр е вĕсем ял тăрăхнех усă кӳччĕр. Хăвăр пурăнатăр вĕт çак вырăнта.

Нефть пăрăхĕ иртекен вырăнти пай çĕрĕсемпе çапла суту-илӳ йĕркелени вара хăвăра валли ыратман пуçа ыраттаракан йышăну туниех пулма пултарать. Мĕншĕн тесен çав аферистсем сĕннĕ хакăн уйрăмлăхне нефть пăрăхне тытса тăракан предприяти çав çынсенчен мар, сирĕнтенех шыраса илет: пай çĕрĕсем сирĕн ятăрпах вĕт. Çакăнта çырса кăтартни кашни ял тăрăхĕнчи пай çĕрĕсен хуçисенех пырса тивет.

### КУЛЬТУРА ĔÇЧЕНĔСЕН ĔÇ УКÇИ СУМЛĂ ПУЛТĂР

Бюджет тенĕрен, вырăнта çирĕп предприяти пулни те бюджета тултарма пулăшать. Çитменнине пĕлтĕр Суворов яч. хис. хуçалăх çӳпçап илсе тухнăшăн та ял тăрăхĕнчен пĕр пус та илмен. Çула тытса тăрассипе те нумай пулăшать вăл.

Татса памалли ыйтусенчен тепри – культура ĕçченĕсен ĕç укçине ӳстересси. Ку енĕпе кунта тĕплĕ калаçу пулчĕ. Анаткассинчи информаципе культура центрĕн директорĕ Лидия Краснова ку енĕпе мĕн туса ирттерни çинче чарăнчĕ. Иртнĕ çул вырăнти бюджетăн çурри – 2 млн. тенкĕ ытла шăпах культура учрежденийĕсене тытса тăма кайнă. Тĕплĕн шухăшланă хыççăн кирлех мар штат единицисем те пурри курăнчĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Павлов та, Суворов яч. хис. хуçалăх ертӳçи Владимир Андреев та кун чухлĕ штат кирлĕ маррине ăнланаççĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ĕç кунта штат чакарас марринче мар, оптимизацилесе тупнă укçана культура ĕçченĕсен ĕç укçине ӳстерме янине палăртрĕ. Ĕç укçи сумлă пулсан кăна паян культурăна çамрăксем килме пултараççĕ. Л. Краснова хăй те пĕлет, вăйлă специалистсем кирлĕ культурăра. Район администрацийĕн пуçлăхĕ калашле, ĕç укçине ӳстерсен культура ĕçченĕсенчен хытăрах ыйтма та пулать. Мĕншĕн тесен муниципаллă заказа культура сферинче пулăшусем парассипе пурнăçламаллах. Çав пулăшусен пахалăхне те ӳстермеллех. Галина Андреева пек ĕçре «çунтарса» тăракансем кирлĕ культурăра. Библиотекарь хăй ĕçĕ çинчен каласа панине сывлăш çавăрса илмесĕр итлеме пулать. Ак мĕнле ĕçлемелле пирĕн.

– Миçе çĕрте пултăм район администрацийĕн кунĕнче, сирĕн пек хăй ĕçĕ çинчен хавхаланса каласа панине пĕрремĕш хут илтрĕм, – терĕ Ростислав Николаевич. – Кун пек ĕçченсене пулăшас та килет.

### ĔМĔР АХАЛЬ ТЕ КĔСКЕ

Тепĕр проблема пур ку ял тăрăхĕнче. Вилекенсем çуралакансенчен нумайрах. Вăтамран илсен ку тăрăхра хĕрарăмсен ĕмĕр тăршшĕ – 78 çул, арçынсен – 58,6 çул. Ахаль те вăрăмах мар ĕмĕре вара арçынсем тĕрлĕ сиенлĕ йăлапа кĕскетеççĕ. Иртнĕ çул Турай ял тăрăхĕнче 46 çын вилнĕ пулсан, 28-шĕ – арçынсем. Вĕсенчен 15-шĕ вара хăй вилĕмĕпе вилмен: кам çакăннă, кам ĕçсе вилнĕ е урăх тем те пĕр. Кунта тарăннăн шутласа харпăр хăй валли тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тумалăх пур. Çавăнпа та Валентина Толстова врач каланă пек, диспансеризаци ыйтăвĕ çине пӳрне витĕр пăхмалла мар. Ăна темиçе тапхăрпа ирттереççĕ. Пĕрремĕш тапхăрĕнче тĕрлĕрен анализсем илеççĕ. Вĕсем вара вăл е ку чире вăхăтра тупса палăртма, çийĕнчех сиплеме пуçлама май параççĕ.

Урăхла каласан хамăр сывлăх хамăрах кирлĕ. Çавăнпа та кашнийĕнех диспансеризаци витĕр тухмалла.

Район администрацийĕн кунĕнче выльăхсене прививка тăвас ыйту çинче те чарăнчĕç. Килте выльăх усракансене çакăн çинчен асилтерес килет. Енчен те ялта килти ĕнене е урăх выльăха прививка тутармалла теççĕ пулсан, тутармаллах ăна. Выльăхăр та сывлăхлă пулать, ытлашши штраф тӳлессинчен те пăрăнса юлатăр. Çапла, çапла, çак правилăна пăхăнмасан административлă майпа явап тыттараççĕ.

### МАГАЗИН УМНЕ ĔÇ КИЛСЕ ПАМАÇÇĔ

Халĕ вара ĕç ыйтăвĕ тавра.

– Вырăнти ял тăрăхĕ тата район администрацийĕ ялта çамрăксем валли ĕç тупса парас тесе мĕн тума пултарать? – пулчĕ ыйту тĕл пулура.

Суворов яч. хис. хуçалăх ертӳçи каланă тăрăх вырăнта ĕç пур. Укçине те Мускавринчен кая мар илеççĕ.

– Анчах та паян аякка çӳреме хăнăхнă çамрăксем ялта ĕçлеймеççĕ. Мĕншĕн тесен кунта дисциплинăна пăхăнмалла, эрех ĕçмелле мар, – терĕ Владимир Славич.

